**«Çитеймен-тĕр шухăшăм…»**

Çитеймен-тĕр шухăшăм
çавăрса хума,
ватăлмасăр пурăнăп
теттĕм пуль хама.

Пĕр ларса шутлатăп та
паянхи куна –
юрату та, пурнăç та
вăхăтлăх кăна.

Иртсе кайнă хыççăн тин
çак кĕрет пуçа,
тĕлĕк курса пурăннăн
халь уçап куçа.

Кашни кун ман кĕрешӳ
теттĕм эпĕ те.
Ку мелпе пурнать чĕр чун,
пурнĕ упăте.

Çитĕнтерĕ кайăк та
чĕпĕ йăвара.
Çыншăн пурăннин пайти
çакă-ши вара?

Йăвана чĕп таврăнмасть,
çыншăн кил – тĕппи.
Пирĕн çĕр çинчи пайта
урăхрах, эппин.

Тăван кил,
          атте-анне
паччăр пире пил,
халăхăмăрăн чĕлхи,
эс нихçан ан вил.

Чăн чăваш, вут куçупа
тĕнчене тĕлле –
Çеçпĕлтен çитен хĕлхем
пултăр ман тĕллев.

Юрату та, пурнăç та
хыçăма юлсан,
Халăхăмăр, эсĕ çеç
вилĕмсĕр пулсам!
*2007*

*Эртиван, С. «Çитемен-тĕр шухăшăм...» : [сăвă] / С. Эртиван // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 496.*